# Сӗрен

Авалхи чӑвашсем ирттернӗ ҫурхи уяв. Ҫава тухиччен пур чир-чӗре хӑваласа ярас та хирти ӗҫе сывӑ ал-урапа тытӑнас тӗллевпе ирттернӗ йӑла уявӗ.

**Вылякансем:**

1. **Сӗрен пуҫлӑхӗ – ватӑ ҫын, йӑла-йӗркене пӗлекенскер.**
2. **Вӑйӑҫӑ.**
3. **Укҫа пухакан.**
4. **Пилеш хуллисем ҫӗклесе ҫӳрекен.**
5. **Кил хуҫи.**
6. **Кил хуҫи арӑмӗ.**
7. **Ватӑ ҫынсем, ҫамрӑксем, ача-пӑча.**

*Ӗҫ пӗр килте пулса иртет. Сӗренҫӗсем ял тӑрӑх ҫӳресе ҫаврӑннӑ. Кил хуҫипе арӑмӗ пӳрт-ҫуртне, сӗтел-пуканне хӑна кӗтсе тирпейленӗ. Сӗтел ҫинче апат-ҫимӗҫ, ӗҫме-ҫиме. Сӗрен ачисем кӗреҫҫӗ. Кашнин аллинче, чир-чӗре хӳтерме, пилеш хулли, ҫава, сенӗк, параппан, шакӑртма, сӗрен т. ыт. те. Ача-пӑча: «Чир-чӗр кайтӑр!» - тесе кӑшкӑрса хӑрах уран сиксе тухать. Ыттисем: «Сӗрен! Сӗрен!» - тесе кӑшкӑраҫҫӗ. Кил хуҫипе арӑмӗ сӗренҫӗсене тараватлӑ кӗтсе илеҫҫӗ.*

### Сӗрень

обработка Ф. Павлова




1.Упи каҫман ҫырминчен
Эпир каҫса килтӗмӗр.
Упи тухман вӑрманчен
Эпир тухса килтӗмӗр.

*Хушса юрламалли:*
Эй, аппа, тус аппа,
Тус аппа, пире кала-ха?
2.Çӳл ампарта вир пăтти –
Çиейресчĕ çупала…
– Йытă кули пултăрах,
Йытă кули пултăрах.
*Хушса юрламалли.*

**Сĕрен пуçлăхĕ:**
Эй, хуçи килте-и?
Çапла-çапла çӳретпĕр,
Авалхи йăлана пăрахмастпăр,
Çĕнĕрен йăла кăлармастпăр.
Ну, хуçасем, мĕн паратăр?!
**Кил хуçи:**
Кĕренке çурă тавах,
Витре çурă кăмăс,
Чăкăт çурă чăкăт,
Çăмарта çурă çăмарта!
**Пĕр ачи:**
Ăна памасан
Выртатпăр та çыв(ă)ратпăр!..
**Пурте:**
Сĕрен! Сĕрен! Сĕрен!

## Пире сăра памасан..




**Пĕр ачи:**
Пире сăра памасан
Киремечĕ тапăнтăр!
Ах-хах, астуман,
Астумасăр каланă.
**Тепĕр ачи:**

Пире пăрçа памасан
Шĕпĕнпеле аптраттăр!
Ах-хах, астуман,
Астумасăр каланă.
**3-мĕшĕ:**
Пире укçа памасан
Чир-чĕр тухса ан кайтăр!
Ах-хах, астуман,
Астумасăр каланă.
**4-мĕшĕ:**
Пире çăмарта памасан
Чăххин кучĕ питĕрĕнтĕр!
Ах-хах, астуман,
Астумасăр каланă.
**5-мĕшĕ:**
Пире сĕт-çу памасан
Ĕни сĕтне типĕттĕр!
Ах-хах, астуман,
Астумасăр каланă.
**6-мĕшĕ:**
Пăрçа кулачĕ памасан
Кăмака çăварĕ ишĕлтĕр!
Ах-хах, астуман,
Астумасăр каланă.
**Сĕрен пуçлăхĕ:**
Кăна эпир ыйтмастпăр, сĕрен ачисем ыйтаççĕ.
**Пурте:**
Сĕрен! Сĕрен! Сĕрен!

*Ачасем сĕренĕпе шатăртаттараççĕ, кам хулăпа çапать, кам çавине шаккать, кам сенĕкпе хăмсарать, чир-чĕре хăваланă пек хăлаçланать.*

**Пĕр ачи:** Эпир сире çапмастпăр, чир-чĕре хăвалатпăр, каçарăр пире!

**Кил хуçи:** Тавтапуçах, ачасем, чир-чĕре хăваласа яма пулăшнăшăн. Халĕ сĕтел хушшине ларăр, апатланăр.

*Кил хуçипе арăмĕ ачасене пăхаççĕ. Ун хыççăн сĕренçĕсем кил хуçисене, тĕпелти урлă сак çине лартса, «пуç çапаççĕ».*

**Кил хуçи:** Ачасем, сире сăрине те, çăмартине те, мăйăрне те, укçине те парса ярар. (Кучченеç валеçет).

**Сĕрен пуçлăхĕ:** Тăвансем, ял-йыш! Йĕркине турăмăр. Пур килте те пултăмăр, чир-чĕртен тасалтăмăр. Халĕ ял хыçне ваттисене асăнма каяр. Вĕсенчен пил ыйтар.

*Вăйăçă ташă кĕвви калать, тепри параппан çапать, ыттисем такмакласа ташлаççĕ.*

## Тухатăп, тухатăп




Кĕçĕр йăва çиетпĕр,
Ыран пăтă çиетпĕр,
Кĕçĕр сĕрен теетпĕр,
Ыран мăнкун теетпĕр.

Сĕрен те сĕрен терĕмĕр,
Сĕрен çитрĕ – иртсе кайрĕ.
Юрлăр, юрлăр, ачасем,
Юрламасăр ан юлăр.

Паян пăтă çиетпĕр,
Ыран яшка çиетпĕр,
Чир-чĕрсене тартрăмăр,
Халĕ таса пурнатпăр.

Пирĕн хыçра пахча пур,
Çав пахчара саркайăк.
Çулçи çупать, улми ташлать,
Саркайăк та савăнать.

*Хĕвĕшсе тухса каяççĕ. Ял хыçĕ. Ачасем ял-йыш панă кучченеçе шурă пир çине тирпейлесе хураççĕ. Юнашарах кăвайт чĕртме вутă хатĕрлесе хунă.*

**Сĕрен пуçлăхĕ:** Эй, ырă халăх, ĕлĕк пирĕн атте-аннесем ваттисене асăнмасăр апатланман. (Апат-çимĕçе тирпейлĕн кашнин умне хурса тухать). Паянхи кун та вĕсене кўрентерер мар. (Пурте пуçтарăнса хĕвел тухăç еннелле çаврăнса тăраççĕ. Сĕрен пуçлăхĕ сăмахне малалла калать).

**Сĕрен пуçлăхĕ:** Эй, Ырă Пўлĕхçĕ! Ан пăрахсамах пире, сана асăнатпăр. Эсир те, асатте-асаннемĕр, тăван-хурăнташăмăр, тантăшăмăр-пĕлĕшĕмĕр, масар хуçи Мирун, эсĕ те, пурте килĕр кунта. Эпир кунта пыллă сăрапа, шурă çăмартапа, тутлă кулачпа, сарă măйăрпа килтĕмĕр. Ял халăхĕ пире питĕ лайăх пăхрĕ. Сире те манмарĕç вĕсем. Йышăнсамăр пирĕнтен тутлă апат-çимĕç.

*Шурă пир çине татах апат-çимĕç кăларса хурать.*

**Сĕрен пуçлăхĕ:** Сывлăх парăр пире! Çирĕп сывлăхлă пулса çур акине йĕркеллĕ ирттересчĕ. Ырлăх парăр пире! Çырлахсамăр. Тайма пуçăм сире.

*Пурте ўксе пуç çапаççĕ.*

**Сĕрен пуçлăхĕ:** Халĕ, тăвансем, кăвайт чĕртер. Ачасем, кӳрĕр-ха хуллăрсене, кăвайта пăрахса çунтарса ярар. Сĕренне те çунтарса ярар: килес çул çĕннине тăвăпăр.

**Пурте:**
Сĕрен, сĕрен терĕмĕр,
Сĕрен çитсе иртсе кайрĕ.
Чир-чĕрсене тартрăмăр,
Халĕ таса пур(ă)нăпăр.
Карчăккисем юрлаччăр,
Стариккисем ташлаччăр,
Ачи-пăчи те ан юлтăр.

*Çак сăмахсене каласа пурте хăйсен пилеш хуллисене, шакăртмисене кăвайта пересçĕ.*

**Пĕри:** Атьăр вăй виçетпĕр! Хăшĕ чи вăйли!
**Çамрăксем:** Атьăр!

*Ачасен пĕр пайĕ кĕрешсе вăй виçет, тепри хăвăрт чупассипе ăмăртать.*

*Мала тухакансене ал шăлли, сурпан, çăмарта т. ыт. те параççĕ.*

**Пĕр ачи:** Ачасем, ир пулчĕ, кĕçех хĕвел те тухать. Килелле каймалла пуль!
**Пурте:** Чăнах та, киле кайма вăхăт. Ыран ĕç нумай пулать.
**Сĕрен пуçлăхĕ:** Эппин, усалсем пирĕнпе ан пыччăр тесе çунакан кăвайт урлă сиксе каçар та хăвăртрах ялалла чупар!
**Пурте:** Атьăр, сикер!

*Вут урлă сике-сике каçса ачасем ял еннелле вĕçтерeççĕ.*

# Выртмара

**Вылякансем:**
**1. Ватăрах çын.**
**2. Ачасем: хĕр ачасем, Петĕр, Иван, т. ыт. арçын ачасем.**
Вылянă чухне кирлĕ япаласем (ачасен пулмалла): шăхличĕ, тăлă, йĕвенсем, чăпăркка, хутаç.

*Сцена çинче тунката, ун çинче ватăрахxи ларать. Ачасем ун йĕри-тавра, вĕсен аллисенче пушă, йĕвенсем, тăлăсем. Инçех мар лашасен мăйне çакса янă пĕчĕк шăнкăравсен сассисем илтĕнеççĕ. Ачасем кăвайт хунă. Ватти шăхличĕ тăвать.*

**1-мĕш ача:** Асатте, асатте, юмах ярса пар-ха.